ТĔРЛĔ ПРОФЕССИ ÇЫННИСЕМ

# Земфира БЕЛОВА: Кĕнекесене те чиртен сиплеме тивет

*Канаш районĕнчи Кăшнаруй ялĕнче çуралса ӳснĕ Земфира Белова амăшĕ пекех биолог-химик пулма ĕмĕтленнĕ. Çывăх тăванĕнчен – ЧАССР тава тивĕçлĕ учителĕнчен Анастасия Кирилловнăран – тĕслĕх илмелли пулнах. Çавăнпа вăтам шкул хыççăнах И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн биологипе хими факультетне вĕренме кĕнĕ. Çак специальноç Земфира Георгиевнăна шкулта кăна кирлĕ пулман. Тĕплĕнрех хăйĕнчен ыйтса пĕлер-ха.*



Автор сăн ӳкерчĕкĕ

**– 39 çул каялла алла диплом илнĕ хыççăн эсир тăван шкулăрăн алăкне вĕрентекен пулса уçса кĕнĕ.**

– Çапла. Çулталăк кăна ĕçлеме тиврĕ тăван ялта. Унтан Шупашкарти Ботаника садне куçрăм. Унта ӳсен-тăранпа ĕçлерĕм: акрăм, лартрăм, сиплерĕм. Пĕр хушă чирлĕ тăвансене пăхма тиврĕ. Кайран ĕç шырама пуçларăм. Кĕтмен çĕртен Наци библиотекинче вырăн пуррине пĕлтĕм. Килсе пăхрăм та – мана сектор заведующине илчĕç.

**– Вулавăшра биолог-химик кирлĕ-и вара?**

– Документсене консервацилекен /упракан/ секторта, вăл паха, сайра тĕл пулакан кĕнекесен пайне кĕрет, шăпах çавăн пек профессиллĕ çын кирлĕ те. Унăн химипе биологие лайăх пĕлмелле. Кунта кĕнекесене çыпăçтарса тата çĕлесе лармалла çеç мар, вĕсене тĕрлĕ чиртен сиплеме тивет. Тивĕçлĕ шайра упрамасан кĕнекесем кăвакараççĕ те, вĕсене хурт-кăпшанкă та тапăнма пултарать. Çавăнтанпа вунă çул иртрĕ те. Унччен библиотекăра кĕнеке хуплашкин мастерскойĕ кăна пулнă. 2003 çулта консерваци центрĕ йĕркеленĕ. Çав вăхăтра пирĕнпе ĕçленĕ çынсем паян çук. Хальхи йышра – мансăр пуçне тата Татьяна Павлова, Светлана Александрова, Татьяна Моисеева. Вĕсем – пĕрремĕш категориллĕ библиотекарьсем, анчах тивĕçĕ пачах урăххи – кĕнекесене, хаçат-журнала, ытти документа иккĕмĕш пурнăç парнелеççĕ.

**– Унсăр пуçне тата мĕн тăватăр?**

– Библиотекăри сывлăш температурине, нӳрĕлĕх шайне ятарлă хатĕрсемпе виçетпĕр. Мĕншĕн виçетпĕр тетĕр-и? Кĕнекесем йĕркеллĕ упранччăр тесе, вĕсем валли тивĕçлĕ условисем туса парас тĕллевпе. Сывлăш нӳрĕлĕхне те, температурине те пĕр пек шайра тытса тăмалла.

**– Мĕнле температура чи лайăххи шутланать?**

– Сывлăш температури 18 градус, нӳрĕклĕх – 55 процент.

**– Енчен те çуллахи шăрăх çанталăкра температура кирлинчен пысăкрах пулсан?**

– Кĕнекесем упранакан вырăнсенчи чӳречесене хĕвел кĕресрен хулăн карăсемпе хупласçĕ, унсăр пуçне пӳлĕмсене уçăлтараççĕ. Кондиционерсемпе те усă кураççĕ. Кĕнекесене тĕттĕмрех вырăнта упрамалла, атту хĕвел çинче тĕсне çухатать, çийĕнсе пĕтет. Çапла ан пултăр тесе кăнтăрлахи вăхăтра чӳречесене карма тăрăшмалла.

**– Калăпăр, пĕр-пĕр кĕнекене кăпшанкă тапăннă е чир лекнĕ. Ăна сыватас ĕçе мĕнрен пуçлатăр?**

– Кĕнеке кăвакарнă тĕслĕх пирĕн библиотекăра питĕ сайра пулать, мĕншĕн тесен условисем лайăх. Анчах вулавăша реконструкци тунă чухне – 2006-2009 çулсенче – документсене ăçта май килнĕ çавăнта упранă. Тепĕр чухне вĕсем çине шыв та аннă пулĕ. Шăпах çав вăхăтра аптăраса юлнă кĕнекесем халĕ сайра хутра тĕл пулаççĕ. Вĕсене дезинфекцилетпĕр те.

**– Мĕнле майпа?**

– Пӳлĕмре çав ĕç валли сывлăш юхăмĕпе кĕнеке тусанне пуçтаракан шкап пур. Унта биоцитсемпе усă куратпăр. Çапла тума пире Раççей Наци библиотекин библиотека фончĕсене консервацилессипе ĕçлекен федераци центрĕ сĕннĕ. Телее, сайра пĕрре кăна усă курма тивет çак мелпе.

**– Çурăлса пĕтнĕ кĕнекесемпе, документсемпе мĕн тăватăр? Пурне те пăрахăçлама май çук-çке. Уйрăмах, питĕ авалхи кĕнекесене, сайра тĕл пулаканнисене мĕнле çĕнететĕр?**

– Унашкаллисене те юсатпăр. Çăнăх çилĕмне хамăрах пĕçеретпĕр. Ăна сивĕтмĕшре те 10 кунран ытла упрама юрамасть. Тавра пĕлӳ фончĕнчи литература – республикăпа çыхăнни, вĕсене кунта пурăнакансем çырнă, вырăнтах пичетленĕ. Унашкаллисем – ĕмĕрĕпех упранма тивĕçлĕ документсем. Вĕсене нихăçан та пăрахăçламаççĕ, çавăнпа пуринчен ытла упраса хăварма тăрăшатпăр.

**– Вĕсене çĕнетмеллине мĕнле палăртатăр?**

– Пилĕк çулта пĕрре кашни пай хăйĕн фондне тĕрĕслет. Уйăхне пĕрре санитари кунĕ иртет. Унта пур пай та, çав шутра – пирĕн сектор та, хутшăнать. Юсамалли кĕнекесене уйăрса илнĕ хыççăн пирĕн пата килсе пареççĕ.

**– Хальхи вăхăтра унашкал миçе кĕнеке?**

– Черет кĕтекенни нумай. Пĕрре те сахалланмасть. Мĕншĕн тесен кивĕ, авалхи кĕнекесем вăхăт иртнĕçемĕн хăвăрт арканаççĕ. Тĕрĕссипе, çĕнни шутланаканнисен те пахалăхĕ лайăхах теейĕмĕн. Теприне, сăмахран, пĕлтĕр кăна пичетлесе кăларнă, ăна вара юсамалла та. Планпа уйăхне 70 документа иккĕмĕш пурнăç парнелемелле. Çак кăтарту пирĕншĕн самай пысăк.Васкаса ĕçлеме тивет. Теприсем пирĕн ĕçе кĕнекене наччасра хут çыпăçтарса хунинче кăна кураççĕ. Ун пек мар. Тепĕр чухне пĕр кĕнекепе пĕр эрне ларма тивет. Хут çыпăçтарнипе ĕç вĕçленмест, ăна пĕтĕмпех салатса тăкма, кирлĕ пулсан кĕнеке страницисене çума, унтан çĕнĕрен пуçтарса çĕлеме тивет.

**– Кĕнекене çăватăр-и?**

– Листисене пĕчĕк ваннăра «мунча» кĕртетпĕр. Вĕсене темиçе хут чӳхентеретпĕр. Виççĕмĕшĕнче вĕретнĕ шывпа чӳхетпĕр. Çунă хут пурçăн пек яп-яка пулать, алла тытма питĕ кăмăллă. Çунă листасене çĕнĕрен пĕрерĕн-пĕрерĕн пуçтарса çĕлесе кĕнеке тăватпăр.

**– Мĕншĕн çăватăр? Хуришĕн-и, таса марришĕн-и?**

– Уншăн та, лӳчĕркеннĕрен те. Теприсен кивĕ çилĕмĕ хăйпăнса кĕнекене вараланать. Питĕрти маларах асăннă центрта пире çапла тума вĕрентнĕ. Пĕлĕве ӳстерме унта çӳретпĕр. Çав центрта хам та икĕ хутчен пултăм. Пĕлтĕр Мускавра, Раççей патшалăх библиотекинче, вунă кун вĕрентĕмĕр. Ун чухне кĕнеке хуплашкине юсамалли майсемпе паллаштарчĕç.

## «ÇУНĂ ЛИСТА ПУРÇĂН ПЕК ЯП-ЯКА, АЛЛА ТЫТМА КĂМĂЛЛĂ. ĂНА ПĔРЕРĔН-ПĔРЕРĔН ПУÇТАРСАН КАЛЛЕХ КĔНЕКЕ ПУЛАТЬ»

**– Çĕнĕ технологисене тĕпе хума сĕнеççĕ пулĕ.**

– Тĕрĕссипе, меслечĕсем çав тери çĕнĕ темĕп, маларах та усă курнă вĕсемпе. Материалĕсем çĕнелсе пынине шута хурса ĕçлеме вĕрентрĕç.

**– Апла ĕçре пушă вăхăт çук та ĕнтĕ.**

– Çапла. Çапах çак ĕçсемсĕр пуçне урăххисене те пурнăçлама тивет. Шкул ачисем валли ăсталăх класĕсем ирттеретпĕр. Пандеми пирки иртнĕ çул сахалрах пулчĕ-ха. Ачасене хамăр пек çĕлеттерсе лармастпăр, пĕчĕк тăпăл-тăпăл кĕнеке-тетте тума вĕрентетпĕр. Унсăр пуçне уйрăм çынсене килĕнчи кĕнекисене юсама вĕрентетпĕр. Эпĕ ертсе пыракан сектор методика центрĕ шутланнă май семинарсем те ирттеретпĕр. Иртнĕ çулхи чӳк уйăхĕнче вĕсенчен пĕрне онлайн мелпе йĕркелерĕмĕр. Унта çавăн пекех республикăри вулавăшсем кăна мар, Мари, Тутар республикисенчи тата Чулхула облаçĕнчи ĕçтешсем те хутшăнчĕç.

**– Енчен те сирĕн пата лекнĕ кĕнеке питĕ кăсăклă, унпа часрах паллашас килсен çавăнтах ларса вулама пултаратăр-и?**

– Тем пек кăсăклă кĕнеке пулсан та вуласа ларма вăхăт çук. Маларах асăнтăм-ха, пирĕн темĕн те пурнăçламалла: алăпа е машинăпа реставраци, дезинфекци тумалла, хуплашкана çĕнетмелле, хаçат-журналăн кашни номерне çĕлемелле… Пĕр-икĕ предложение пăхса илнипех лăпланма тивет. Ман унашкал тĕслĕх темиçе те пулнă: юсаса пĕтернĕ, пая тавăрса панă хыççăн килĕшнĕ кĕнекене илсе килте вулатăп.

**– Кунта иртнĕ ĕмĕр пуçламăшĕнче тухнă кĕнекесем, брошюрăсем выртаççĕ. Вĕсемпе мĕн тăвасшăн?**

– Хуплашкисем питĕ çӳхе пулнăран çуркаланса пĕтнĕ. Халĕ хулăн хуплашкаллă тăватпăр – тата нумай çул упранччăр. Акă саланнă авалхи кĕнекене пусмапа çĕленĕ, эпир ăна çĕнĕрен пуçтаратпăр тата хуплашкине улăштаратпăр. Картонсенчен хамăрах ăсталанă контейнера вырнаçтаратпăр. Вĕсенче чи хаклă, пысăк пĕлтерĕшлĕ кĕнекесем упранаççĕ. Ку – Чăваш автономине йĕркеленĕ хыççăн кун çути курнă «Известия» хаçат. «Республикăри пĕртен-пĕр экземпляр», – çырнă хут татăкĕ те кунтах. Çав хаçатăн упранса юлнă номерĕсене сапласа контейнера хутăмăр. «Красная Чувашия» хаçата, 1938-1989 çулсенче пичетленнĕскере, Питĕрти центрта ламинировани тунă, мĕншĕн тесен пирĕн хальлĕхе унашкал аппарат çук, вăл питĕ хаклă. Кашни листишĕн 700 тенкĕ тӳленĕ.

**– Эпĕ кунашкал кĕнекене – 1872 çулта пичетленĕ тĕн кăларăмне – пуçласа куратăп. Ăна тата мĕн тумалла?**

– Тасатма килсе панă. Кашни листин тусанне киçтĕкпе, марльăпа тасататпăр, кăвакарнă вырăнĕсене дезинфекци тăватпăр. Химикатсемпе пĕлсе усă курма тивет. Вĕсем хута юрăхсăра кăларма та пултараççĕ. Çавăнпа кашни кĕнекепе питĕ тимлĕ ĕçлемелле. Эпир, тĕпрен илсен, реставратор тивĕçĕсене пурнăçлатпăр.

**– Эпĕ сирĕн ĕçĕрпе паллашрăм та хам валли çакăн пек пĕтĕмлетрĕм: арçынсем тумалли çăмăл мар тивĕççене эсир, черчен хĕрарăмсем, пурнăçлатăр.**

– Чăнах та, кĕнеке хуплашки тăвасси хĕрарăм ĕçĕ мар пек. Тутарстанри тĕп вулавăшра пирĕнни пек пайра пĕтĕмпех арçынсем ĕçлеççĕ.

**– Çывăх çыннăрсем пирки те каласа кăтартсамăр.**

– Икĕ ывăл. Ĕçлеççĕ: пĕри – программист, тепри – юрист. Мăшăр Леонид Викторович хальхи вăхăтра тивĕçлĕ канура, унччен тĕп хулари транспорт тата строительство технологийĕсен техникумĕн директорĕ пулнă. Канмалли кунсенче хамăн тăван тата мăшăрăн ялĕсене çӳретпĕр. Атте-анне çуртне тытса тăратпăр, вĕсем тунине пĕтерес килмест. Унтах пахча çимĕç ӳстеретпĕр. Анне Анастасия Кирилловна биологи вĕрентнĕ, атте Георгий Кузьмич – истори. Ялта хисеплĕ çынсем пулнă. Аннене хăйĕн ĕçĕпе республикăра кăна мар, Совет Союзĕпех пĕлнĕ. Унăн шкул çумĕнчи участокне çĕршывра чи лайăххи тесе темиçе хут та йышăннă. Лесничество та пулнă. Темĕн те ӳстернĕ çав лаптăксенче. Кунта хальччен пулман культурăсене лартса тĕпченĕ, вăррисене таçтан та çырăнса илетчĕ, хăй те хатĕрлетчĕ. Пурте лайăх çитĕнетчĕç тата. «Анастасия Кирилловнăн алли çăмăл», – тетчĕç. Аппа тухтăр, Мускавра ĕçлет. Аннене кура-ши – хам чечек ӳстерме юратăп. Килте те, ялта та, ĕçре те тĕрлĕ чечек çитĕнтеретĕп.

**– Апла сирĕн аннĕр чăваш ялне çĕнĕ сăн кĕртекен пулнă.**

– Чăнах çапла. Вăл иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче Кăшнаруйсене чечексем лартма, сад ĕрчетме вĕрентрĕ. Ирган, сырланăн тĕрлĕ сортне, ыттине ял-йышра салатрĕ. Халĕ унăн йывăçĕсене упрама тăрăшатпăр. Пахча çимĕç çитĕнтерессипе çеç мар, чăх, хур чĕппи чирлесен те анне-рен пулăшу ыйтма пыратчĕç. Вăл çеç-и? Чуна уçса калаçмалла чухне те ял-йыша анне кирлĕччĕ. Вăл 81 çулта çĕре кĕчĕ. Атте ун хыççăн тата вунă çул пурăнчĕ. Иккĕшне те пăхрăм. Атте – Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕ, фронтран орден-медальпе килнĕ. Аннен те награда чылайччĕ: Хисеп Палли орден, Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп хучĕ темиçе те пулнă. Халăх хуçалăх выставкин куравĕсене вунă хут ытла хутшăннă. Ял çыннисем çывăх тăванăмсене халĕ те ырăпа асăнаççĕ.

**Надежда СМИРНОВА.**